Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

10 (7650) № * Шӑмат кун, 2009 ҫулхи февралӗн (нарӑс) 7-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

«Сывлӑх» нацпроекта пурнӑҫа кӗртсе

## Ял ҫыннисен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшаҫҫӗ



*– Сывлӑха кашнин упрамалла, - терӗ Ярапайкассинчи пӗтӗмӗшле врач практикин уйрӑмӗн заведующийӗ Валентина Николаевна Любимова (сӑн ӳкерчӗкре малти). Унӑн ҫутӑ ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртессишӗн кунта 3 тухтӑрпа 4 медицина сестри, 2 санитаркӑпа водитель тимлеҫҫӗ. Чӑваш патшалӑх университечӗн медицина факультетне вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн направлени Ярапайкасси тӑрӑхне килсе вырнаҫнӑ В. Любимована паян кунта пурте хамӑр ял тесе йышӑнаҫҫӗ. Ултӑ ҫул каялла уҫӑлнӑ пӗтӗмӗшле врач практикин ҫак офисӗнче, унччен кунта пулнӑ ялти врач амбулаторийӗнчи ӗҫ стажне шутласан, Инна Михайловна Силова врач та 15 ҫул вӑй хурать. Вӑл та йывӑр вӑхӑтра ку тӑрӑхри ял ҫыннисемшӗн ҫӑлӑнӑҫ кимми.*

*– «Сывлӑх ҫинчен» нацпроект пӑхнӑ мероприятисене вӑхӑтра туса ирттересси – пирӗн тӗп ҫулйӗр. Ҫакӑ вӑл ҫӗр-шыв ертӳҫисем ял ҫыннисен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшнин палли, – терӗҫ ӗҫрен самантлӑха пушаннӑ тухтӑрсем.*

**Анатолий БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Кӗскен

### Ҫамрӑксемшӗн – тӗслӗх

Районта февралӗн 1 – 20-мӗшӗсенче «Чи лайӑх наставник – 2009» конкурс иртет. Ҫак хисеплӗ ята кашни отрасльтех палӑртаҫҫӗ.

Пирӗн вырӑна ҫамрӑксем йышӑнмалла. Яш-кӗрӗме ӗҫе явӑҫтарасси – аслисен тивӗҫӗ. Ҫамрӑксемшӗн тӗслӗх пулса тӑракан ӗҫченсем районта сахал мар.

### Электрон кӗнеке

«Муркаш районӗн писателӗсемпе таврапӗлӳҫисем» ятпа электрон кӗнеке хатӗрленӗ. Вӑл икӗ пайран тӑрать: пӗрремӗшӗ писательсемпе, иккӗмӗшӗ краеведсемпе паллаштарать. Кунта сумлӑ ятсемпе пӗрлех ҫамрӑксем те пур, вӑл шутра Раиса Соловьева, Олег Прокопьев тата ыттисем те.

Кӗнекене районти библиотекӑсенче февралӗн 13-мӗшӗнче пахалаҫҫӗ.

Ҫулталӑка пӗтӗмлетсе

## Тимлӗхе ҫухатас марччӗ

Районӑн иртнӗ ҫулхи социаллӑ-экономика аталанӑвне пӗтӗмлетнӗ чух Муркаш Енри гражданла оборона тата чрезвычайлӑ лару-тӑру тишкерӗвне те айккинче тӑратса хӑварма ҫук. Районти ответлӑ органсем ку енӗпе килӗшӳллӗ ӗҫлесе пыраҫҫӗ, ума лартнӑ тӗллевсене вӑхӑтра пурнӑҫлаҫҫӗ. Ҫакӑ «Раҫҫей Федерацийӗн вырӑнсенчи самоуправлени йӗркелӗвӗн пӗтӗмӗшле принципӗсем ҫинчен» Федераллӑ саккуна ӑнӑҫлӑ пурнӑҫа кӗртесси ҫине те витӗм кӳрет.

Иртнӗ ҫул тулли хӑватпа ӗҫлесе районта пушар тухаслӑха 54 процент, вутҫулӑмра ҫынсем вилнӗ тӗслӗхсене 66 процент чакарни, ял тӑрӑхӗсенчи нормӑлла право базине «Гражданла оборона ҫинчен» Федераллӑ саккун ыйтнӑ шая лартни, ҫынсене хӳтӗлев мелӗсене вӗрентме вӗрентӳпе консультаци пункчӗсем уҫни тата ҫак ӗҫсемпе 2009 ҫул валли ӗҫ планӗсен палӑртни районна республика шайӗнче ырӑпа асӑнма май пачӗ.

Гражданла оборона системине, чрезвычайлӑ лару-тӑрӑва асӑрхаттарас тата сирсе ярассипе ӗҫлекен пӗрлехи патшалӑх системин Чӑваш Республикинчи территори подсистемине лайӑхлатассипе ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн Муркаш район звеноне тата район тытӑмӗнчи Муркаш ял тӑрӑхне 1-мӗш степеньлӗ дипломсемпе наградӑланӑ.

**Н. МИЛЮТИН,**
**район администрацийӗн гражданла оборона тата чрезвычайлӑ лару-тӑру пайӗн пуҫлӑхӗ.**

Республикӑра

## Хӗвел ҫаврӑнӑш та пулӗ, ыраш та ҫитӗнӗ

Ытлари кун Правительство ҫурчӗн Пӗчӗк залӗнче 2009 ҫулта Республика кунне хатӗрленсе ирттерес енӗпе ӗҫлекен йӗркелӳ комитечӗн ларӑвӗ пулнӑ, ӑна ЧР Президенчӗн Администрацийӗн ертӳҫи Анатолий Шарапов ирттернӗ.

Яланахи пекех уяв программин никӗсӗнче тӗл пулусемпе семинарсем, культура акцийӗсемпе спорт мероприятийӗсем пулӗҫ, социаллӑ пӗлтерӗшлӗ темиҫе объекта хута яма палӑртнӑ.

Ларура уяв кунӗсенче Шупашкарти II экономика форумне, Пӗтӗм Раҫҫейри халӑх пултарулӑхӗн XVII «Раҫҫей ҫӑл куҫӗсем» фестивальне, Пӗтӗм Раҫҫейри ал ӑстисен япалисен VII «Ӑстисен Руҫӗ» конкурсне ирттерессине, ҫивӗч ытти ыйтӑва пӑхса тухнӑ.

Аса илтерер: 2009 ҫулта Вӑрмар районӗпе Шупашкар хули уяв центрӗсем пулӗҫ. Вӑрмар поселокӗнче чукун ҫул вокзалне, физкультурӑпа спорт комплексне тата историпе таврапӗлӳ музейне уҫма палӑртнӑ.

Чӑваш Енӗн тӗп хулинче харӑсах икӗ суту-илӳ центрӗн алӑкӗсем уҫӑлӗҫ. Урамсене Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗпе килӗшӳллӗ илемлетӗҫ: хула газонӗсем ҫинче хӗвел ҫаврӑнӑш та чечекленӗ, ыраш та шӑркана ларӗ.

Йӑлана кӗнӗ йӗркепе ҫӗртме уйӑхӗн 24-мӗшӗнче Шупашкар заливӗ ҫийӗн тӳпене уяв фейерверкӗ ҫутатӗ.

Тӗл пулӑва чӗнеҫҫӗ

## Афганистан асран тухмасть

Кӑҫалхи февраль уйӑхӗнче Совет ҫарӗсене Афганистан Республикинчи 10 ҫул пынӑ вӑрҫӑран илсе тухнӑранпа 20 ҫул ҫитет. Ҫак куна паллӑ тӑвассипе районти интернационалист-салтаксен пӗрлехӗ тӗплӗ хатӗрленет. Асӑннӑ куна паллӑ тума районтан ҫав вӑрҫӑна хутшӑннисем февралӗн 14-мӗшӗнче Москакассинче Афганистанра пуҫ хунисене халалласа лартнӑ палӑк умне 10 сехете пуҫтарӑнӑпӑр. Тӗл пулӑва ҫав вӑрҫӑра пулнисене, унта пуҫ хунисен ашшӗ-амӑшӗсемпе тӑванӗсене, вӑрҫӑран тавӑрсан мирлӗ вӑхӑтра пурнӑҫран вӑхӑтсӑр уйрӑлса кайнӑ юлташӗсен мӑшӑрӗсемпе ачисене чӗнетпӗр. Кунта Тӑван ҫӗр-шыв интересӗсене сыхласа пуҫ хунисене чыслана хыҫҫӑн пӗрле Калайкассинчи вӑтам шкулта хамӑр музейра пулӑпӑр, пӗрлехи пухура мирлӗ пурнӑҫра та активлӑ интернационалистсене тата вӗсене пулӑшса пыракансене чыслӑпӑр.

**ИНТЕРНАЦИОНАЛИСТСЕН РАЙОНТИ КАНАШӖ.**

Ҫӗр улми – 2009

## Выставка чӗнет

Чӑваш Республикин Ял хуҫалӑх министерстви февралӗн 19-20-мӗшӗсенче Шупашкарта «иккӗмӗш ҫӑкӑр» отраслӗн «Ҫӗр улми-2009» выставкине тата «Ҫӗр улми туса илессин аталанӑвӗсен инновациллӗ малашлӑхӗсем» наукӑпа практика конференцине ирттерет. Унта ҫӗр улми туса илекенсемпе тата унран хатӗрленӗ продукцисем кӑларакансем, минераллӑ удобренисемпе, ӳсен-тӑрана сыхлакан имҫамсемпе, ҫӗр улми туса илмелли малта пыран техникӑпа тивӗҫтерекен наукӑпа тӗпчев институчӗсем, финанс учрежденийӗсем, аудитор фирмисем хутшӑнӗҫ.

Выставка Чӑваш оперӑпа балет театрӗнче вырнаҫӗ, конференци вара Чӑваш патшалӑх ял хуҫалӑх академийӗн актовӑй залӗнче иртӗ.

Чӑваш Ен ҫӗр улми туса илекен регион шутланать. Иртнӗ ҫул пирӗн республика «иккӗмӗш ҫӑкӑр» туса илессе висӗм ҫулхинчен 115,9 процент ӳстернӗ.

Асӑннӑ выставкӑпа конференци Чӑваш Республикин Президенчӗн «Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗ ҫинчен» Указне пурнӑҫласа иртет. Унӑн тӗп тӗллевӗ – ҫулталӑкра миллион тоннӑран кая мар ҫӗр улми туса илесси.

Ыйтӑр – хуравлатпӑр

## Ашшӗ-амӑшӗсене – орден



**«Раҫҫей шайӗнче «Родительская слава» ордена нумай ачаллӑ ашшӗ-амӑшӗсене пама йышӑнни не телевизорпа курнӑччӗ. Пирӗн районта ӑна хӑҫан пама пуҫлӗҫ?»**

**Ҫакнашкал ыйту килчӗ пирӗн хаҫат редакцине. Хуравне вара ЧР Сывлӑх сыхлавӗн тата социаллӑ аталану министерствин Муркаш районӗнчи социаллӑ хӳтлӗх пайӗн ертӳҫи Н.П. Петрова пачӗ:**

– Чӑнах та, Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ 2008 ҫулхи майӑн 13-мӗшӗнче «Родительская слава» орден ҫинчен 775 № Указ кӑларчӗ. Ҫак ордена ЗАГС пайӗсенче ҫемье йӗркеленнине алӑ пусса ҫирӗплетнӗ ҫемьесене 4 тата ытларах ача пӑхса ӳстерекен е ачисене усрава илнӗ тата тулли мар (ачасен ашшӗ е амӑшӗ вилнӗ пулсан) ҫемьесенчи ашшӗне е амӑшне пама палӑртнӑ.

Асӑннӑ категорие кӗрекенсен ҫемйи сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытни, социаллӑ ответлӑ ҫемье пулни пысӑк вырӑн йышӑнать. Ашшӗамӑшӗ (усрава илекенсем) ачисене йӗркеллӗ пӑхса вӗсен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшнине, ачасем мӗнле вӗренсе пынине тата вӗсен ӑс-хакӑлӗ еплерех пулнине те шута илеҫҫӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, ҫак ҫемьесен ҫирӗп, обществӑра авторитетлӑ, хисеплӗ, тӗслӗх вырӑнӗнчех пулмалла. Ҫакнашкал ҫемьесем ачисене лайӑх воспитани панӑшӑн илнӗ Тав ҫырӑвӗсене, ытти наградӑсене те тишкереҫҫӗ. Вӗсем йӗркеллӗ кил-ҫуртра пурӑннине, хуҫалӑха аван тытса пынине те ҫак сумлӑ наградa памалли критерисен шутне кӗртнӗ.

Орден илекенсен тӑватӑмӗш ачи 3 ҫултан кӗҫӗн мар тата ытти ачисен те пурӑнмалла. Анчах та нумай ачаллӑ ҫемьере ачисем Тӑван ҫӗр-шыва е унӑн интересӗсене хӳтӗленӗ чух пуҫне хунӑ (аманнӑ, контузи е ӗҫри условисене пула чирлесе вилнӗ) е хыпарсӑр ҫухалнӑ пулсан, вӗсене шута илеҫҫӗ. Усрава илнисене вара орден вӗсем ачисене пилӗк ҫултан кая мар пӑхаҫҫӗ пулсан ҫеҫ параҫҫӗ. «Родительская слава» ордена пӗрле, указра палӑртнӑ тӑрӑх, пӗр хутчен 50 пин тенкӗ укҫа парса хавхалантараҫҫӗ.

2008 ҫулхи декабрӗн 25-мӗшӗнче РФ Президенчӗ ҫумӗнчи наградӑсем парассипе ӗҫлекен комисси ларӑвӗ пулса иртнӗ. Унта ҫак ордена парас енӗпе ятарлӑ сӗнӳсем ҫирӗплетнӗ. Орденпа наградӑлассине Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунӗ – майӑн 15-мӗшӗ тӗлне палӑртса хунӑ. Ҫулталӑкра орден илекенсен хисепӗ Раҫҫейре 100 ҫын таран пулмалла. Ҫавӑнпа та Раҫҫей Федерацийӗн субъекчӗсенче ҫак ордена пӗр е икӗ ҫын кӑна тивӗҫме пултарать.

Ордена илме тӑратасси ҫинчен чи малтан ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем район пуҫлӑхӗ патне ходатайствӑпа тухаҫҫӗ. Район пуҫлӑхӗ – республика Президенчӗ патне, республика Президенчӗ – Раҫҫей Президенчӗ патне. Ходатайствӑпа пӗрле социаллӑ хӳтлӗх, сывлӑх сыхлавӗ, вӗрентӳ, шалти ӗҫсен пайӗсенчен илнӗ справкӑсем тӑратмалла. Усрава илнисен вара опека тата попечительствӑпа ӗҫлекен органта та ҫыхӑнса илмелле пулать. Ку ҫемьене пур енлӗ тишкернине пӗлтерет.

РФ Президенчӗ ҫумӗнчи наградӑсем парассипе ӗҫлекен комисси пур кандидатурӑна та тӗплӗн пӑхса йышӑну тӑвать. Каламалла, малараx саккунпа килӗшӳллӗн нумай ачаллӑ амӑшӗсене «Медаль Материнства» е «Материнская Слава» орден панӑ пулсан, вӗсене халӗ «Родительская слава» ордена наградӑламаҫҫӗ.

Пирӗн районта та ку ыйтупа ӗҫлеме комисси йӗркеленӗ. Ӑна район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ А.Е. Андреева ертсе пырать.

Ҫырӑнтару – 2009

### Иккӗмӗш ҫур ҫул валли ҫырӑнтараҫҫӗ

**Хаклӑ вулакансем! Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата иккӗмӗш ҫур ҫулта илсе тӑма февраль – март уйӑхӗсенче унчченхи хакпах ҫырӑнтараҫҫӗ. Ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 191 тенкӗ те 70 пус.**

**Райхаҫат редакцийӗ.**